Иванов К.В. Шуйттан чури : (трагеди сыпăкĕ) / К.В. Иванов // Сунтал. – 1940. - № 8. – С. 9.



Константин Васильевич Иванов ача чухне.

*К. В. ИВАНОВ*

# ШУЙТТАН ЧУРИ

*(Трагеди сыпăкĕ)*

Асапланса выртатăп,
Сăнă тухрĕ витĕрех
Кăкăрăма шăтарса.
Мана хамăн айăпшăн
Турă асап ячĕ пуль.
Эй, турăçăм, пиччем те
Ку асапа курминччĕ,
Усал ĕçне тăвиччен
Унăн ăсне çухатсам;
Тăвансемшĕн çапăçма
Тасат унăн кăмăлне;
Вăрçă хушшине кĕртсе
Вĕрилентер чĕрине,
Тăвансемшĕн çапăçса
Тасатсамччĕ айăпне.
Вăл та çаплах, ман пекех,
Шуйттан чури пулминччĕ.

Пиччем, пиччем! Эсĕ те,
Суккăр ан юл ман пекех.
Куçна уçса пăх, пиччем,
Мĕнле эпир çынсемччĕ?!
Укçашăнах çунтăмăр,
Ылттан-кĕмĕлшĕн çунса,
Çынна тĕрлĕ хĕстерсе,
Çынна йĕртсе-макăртса
Пуçтартăмăр пуянлăх.
Пуçтартăмăр пуянлăх
Хамăр ырă курасшăн,
Анчах пухнă мулпала
Эпир тăранмарăмăр.
Вăрçă тухрĕ... Вăрçăри
Вилнисене çаратса
Укçа тупма, пуçтарма
Эпир вăрçа килтĕмĕр.

Анне ячĕ ӳлесе
Пирĕн шухăша сиссе,
Урайĕнче йăваланчĕ
Мĕскĕн анне ман умра:
Ан кай, ачам, ан кайсам,
Хăвăн пуçна пĕтерĕн,
Ан ухмахлан укçашăн,
Мĕн пурри те çитĕ-çке.
Анчах пирĕн чĕресем
Хускалмарĕç çапах та.
Арăм ячĕ ӳлесе
Тăлăх юласне сиссе:
—Ан кай, ан кай, пĕтетĕн.
Чуну ӳкĕ тамăка...
Анчах эпĕ ăна та
Итлемерĕм çапах та.
Ман шухăшра укçа çеç
Йăлтăртатса тăратчĕ.
Хăрамасăр-тумасăр
Тухрăмăр та килтĕмĕр,
Анне юлчĕ ылханса,
Арăм юлчĕ макăрса.
Анчах çӳлтен, эй, турă!
Эсĕ пире сăнанă.
Хамăн усал шухăшшăн
Эсĕ мана тавăртăн:
Вăрçа кĕнĕ-кĕменех
Сăнă чикрĕç кăкăра;
Ăнсăр пулса йăванса
Юлтăм эпĕ хир варне
Пĕр пĕччене çакăнта.
Хамăн айăпа курса,
Ирсĕр ĕçĕме пĕлсе,
Пăшăрханса çунмашкăн,
Пĕр пĕччене выçăхса
Асапланса вилмешкĕн
Тискер пушă хир варне,
Туррăм, мана пăрахрăн.
Ирсĕр чунлă усала
Тивĕçлипе тавăртăн...
Вăйăм пĕтрĕ, ӳт сивĕ,
Чĕрем ăшне хурт çиет.
Эй, турă! Айăпăмшăн
Чунтан-вартан ӳкĕнсе,
Чунтан-вартан йăлăнса
Санран çăлăнăç ыйтатăп!
Сĕм пĕлĕтсем юхаççĕ
Çут тĕнчене хуплас пек.
Тамăк тĕпĕ уçăлать
Ман чунăма çăтас пек.
Шуйттан тухать тамăкран
Ман чунăма илесшĕн.
Вилĕм, вилĕм килет, ав,
Тăсать хăйĕн аллине.
Тамăк çунать ман айра,
Ав, шуйттансем килеççĕ.
Эй, турăçăм, çăл мана,
Пĕтме ан пар чунăма!..—
Вăйĕ пĕтсе çитнипе
Унăн чĕлхи чарăнчĕ.
Куçĕсемпе анчах вăл
Çӳле пăхса кĕл тăвать.
Татах вăйне пуçтарса:
Эй, турăçăм, терĕ те
Ăнсăр пулчĕ çавăнтах
Вăйран-халран кайнипе.